Иванов К.В. Выçă аптăранăскерсем : халап / К.В. Иванов
// Илемлĕ литература. – 1941. - № 2. – С. 18.

# ВЫÇĂ АПТРАНĂСКЕРСЕМ

ХАЛЛАП

I

Пурăнаттăн пит аван,
Курайманччĕ выç куна.
Анчах, тăванăм, паян
Апат лекни çăварна?
Ларса хырăм тăранмасть,—
Мĕнле шухăш тытатăн?
Ĕç шырарăн—тупăнмасть,—
Ăçта кайма тăватăн?
— Илĕп çеç эп пурттăма,
Чĕнĕп пĕрер юлташа,
Кайăп юта вăрлашма,
Ан асăнăр чăваша.

II

Иван пичче пӳртĕнче
Выçă ларнă виçĕ кун,
Анкă-минкĕ пуçĕнче
Çапла шухăш пулнă ун:
Тата пăртак ларсанах
Апат килсе тухĕ ак.—
Ак тамаша! Çавăнтах
Вĕçрĕ кĕчĕ пĕр курак.
Леш, выçăскер, куракне
Пăхса-туса тăмарĕ,
Мĕнле апат иккенне
Авантарах пăхмарĕ,
Апат килчĕ, терĕ те
Ячĕ тытрĕ çавăнтах,
Курак пуçĕ пĕтрĕ те,
Курак пиçрĕ вутсăрах.

III

Çӳлте пĕлĕт кăн-кăвак,
Ура айĕ—шурă юр.
Хирте çӳрет выç тукмак,
Унăн пурăнăç хĕн-хур.
Çӳрет тукмак кăнтăрла,
Çӳрет тукмак çĕрĕпе,
Пырса кĕрет ялалла;
Çын хăвалать йыттипе.
Анчах апат тупăнмасть,
Унăн выçă вилмелле...
Тукмак ӳкнĕ, хускалмасть,
Вăл вилнине пĕлмелле.
Пĕтерчĕ те юмахне,
Ватти хушрĕ сăмахне:
Çапла, ачам, выçăхсан,
Çын тухать çав ухмаха:
Хăшĕ çиме пулмасан
Каять вăрă-хураха,
Хăшĕ Йăван ухмах пек
Курак çиет аташса,
Хăшĕ кашкăр-тукмак пек
Вилсе каять выçăхса.

1907-мĕш çулхи декабрĕн 30-мĕшĕ.